Çунтал
библиотеки

Р1
Л49
2567744ЧВ

Чăваш. совет
писателĕсен
Союзĕ



М. Й. ЛЕРМĂНТĂВ

# ТАМĂӇ

1936

ЧĂВАШИЗДАТ
ШУПАШКАР

№ 5

## I.

Тамањ вăл—Раççейри тинĕс хĕррисенчĕ-ларакан хуласенчен чи пӳтсĕр пĕчĕк хула. Епĕ унта кĕçех выçă вилеттĕм, çитменне тата мана унта шыва путарма тăчĕç. Епĕ вăл хулана йамшăк лашисемпе чылай каçа йулса çитрĕм. Йамшăк ĕшеннĕ тройкăна хула хĕрринчи пĕртенпĕр чул çурт хапхи умне пырса тăратрĕ. Хуралçă, хура тинĕс казакĕ, шăнкăрав сассине илтсенех ыйхă тĕлĕшпе: «Кам килет?» тесе тискер сасăпа кăшкăрса пăрахрĕ. Уретникпе теçетник тухрĕç. Епĕ вĕсене хам офицер иккенне, вăрçăра хисепленекен отрйада хысна ĕçĕпе кайни çинчен ăнлантарса патăм та, хваттер ыйтма пуçларăм. Теçетник пире хула тăрăх илсе кайрĕ. Хăш пӳрт патне пыратпăр—пурне те йышăннă. Çанталăк сивĕччĕ, епĕ, виçĕ каç çывăрмасăр халран кайнăскер, çилленме пуçларăм.—Илсе кай мана ăçта та пулин, вăрă-хурах! Хăт шуйттан патне, туљăк вырăн тупса пар!—кăшкăрса пăрахрăм епĕ.—Пур тата тепĕр хваттер,—терĕ теçетник, ĕнсине хыçкаласа,—туљăк ваше благородине килĕшсех каймĕ, таса мар унта! Унăн йулашки сăмахĕ мĕне пĕлтернине ăнланса илеймесĕрех, епĕ ăна

малала утма хушрăм. Унтан вара, таса мар пралуксем тăрăх чылайччен çапкаланса çӳренĕ хыççăн, епĕ вăл пралуксен икĕ йенĕпе ишĕле пуçланă кивĕ сапурсене çеç куртăм, епĕр лапах тинĕс хĕрринче ларакан пĕр пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнтăмăр.

Тулли уйăх манăн çĕнĕ çуртăн шурă çтенисемпе хăмăшпа витнĕ тăррине çутатса тăрат. Лутрарах чул хӳмепе çавăрса тунă килкартинче малтанхинчен пĕчĕкрех те кивĕрех тепĕр лаç хăйаккăн пăхса ларат. Ун çтенисем çумĕпе тинĕс çыранĕ чăнкăланса анат, лере вара, айалта, вĕçĕмсĕрех шавласа тăракан тĕксĕм те сенкер хумсем чӳхенеççĕ. Уйăх лăпкăн çутатат, вăл канăçсăр, анчах хăйне пăхăнакан çанталăк вăйĕ çине шăппăн пăхат. Епĕ ун çуттинче, çыранран инçетре икĕ карапа куратăп, айакри шупка пĕлĕт çинче вĕсен хура мачтисен урлăшкисем ерешмен карти йевĕр, пĕр хускалмасăр сăнланса тăраççĕ. «Пристăнре карапсем пур,—шухăшларăм епĕ,—ыран Геленджике кайатăп».

Ман çумра деншчик ĕçне чикĕри отрйадра тăракан казак туса пыратчĕ. Епĕ ăна, чăмадансене илсе йулса, лавçине кайала йама хушрăм та, кил хуçине чĕнме пуçларăм — чĕнмеççĕ; шаккатăп—чĕнмеççĕ... Мĕн ку? Йулашкинчен çенĕхрен пĕр вунтăватă çулала çитнĕ ача мĕшĕлтетсе тухрĕ.—Хуçи ăçта?—Çук.—Мĕнле, пачах çук-и?—Пачах.—А хуçи майри?—Слободкăна чупрĕ.—Кам мана алăк уçса кĕртет?—терĕм епĕ, алăка урапа тапса. Алăк хăйех

уçăлчĕ: пӳртрен нӳрĕк шăрши тухрĕ. Епĕ шăрпăк çутса йатăм та, çунакан шăрпăка ача сăмси патне илсе пытăм: вăл ачан шурă куçĕсене çутатса кăтартрĕ. Вăл суккăр, çураласси не те çаплах, пăч-суккăрах çуралнă иккен. Вăл ман умра пĕр хускалмасăр тăрат, епĕ унăн сăн-пичĕ çине пăхма пуçларăм.

Тунмастăп, суккăрсемпе чапрассем, хăлхасăр та чĕлхесĕр, ал-урасăр, курпун т. ыт. çавăн пек çынсем çине епĕ хирĕçрех пăхатăп, мана вĕсем мĕнле çынсем иккенни малтанах, хăйсене куричченех пĕлнĕн туйăнат. Епĕ асăрханă, етемĕн çийелти сăнарĕпе чунĕ хушшинче йаланах темле, тĕлĕнмеле çыхăну пур пек: етем хăй кӳлепин пĕр-пĕр пайне çухатсан вара, унăн чунĕ те пĕр-пĕр сисĕмне çухатат пек.

Çапла ĕнтĕ, епĕ суккăр ачан питне сăнама пуçларăм, анчах ун çинче, çитменне тата куçсăр пит çинче мĕнех вуласа тухма хушатăр-ха есĕр мана?.. Ирĕксĕрех хĕрхенсе нумайччен пăхса тăтăм епĕ ун çине, çак самантрах унăн çӳхе тути çине аран-аран палăракан кулă килсе иртрĕ, хам та пĕлместĕп, темшĕн, вăл ман кăмăла питех те пăтратрĕ. Манăн пуçра асăрханулă шухăш çуралчĕ,—ку суккăр ача, мана вăл суккăр пек туйăнат пулсан та, ытлашши суккăрах та мар пулĕ; куçа шурă илнĕ пек тума май çук, мĕнле сăлтавпа ун пек тăвас-ха? тесе хама-хам ĕнентерме тăрăшрăм епĕ. Анчах мĕн тăвăн-ха? Çынсем çинчен малтанах пĕлсе тăрса хама ĕнентерес туртăм часах пулкалат çав манăн...

— Есĕ хуçа ывăлĕ-и?—ыйтрăм епĕ йулашкинчен.

— Йок.

— Кам вара есĕ?

— Тăлăх, мĕскĕн.

— Хуçа майрин ачисем пур-и?

— Йок, хĕрĕ пурччĕ, вăл та тинĕс леш йенне тутарпа йерĕшсе кайнă.

— Мĕнле тутарпа?

— Кам шуйттанĕ пĕлет ăна! Крым тутарĕ, Керчри кимĕçĕ.

Епĕ пÿрте кĕтĕм. Пÿртре ларса-тăмали йапаласенчен икĕ тенкел, пĕр сĕтел тата кăмака çумĕнче ларакан пĕр пысăк арча кăна. Çтена çинче пĕр турăш та çук—ырра мар ку паллă! Çĕмрĕк чÿрече витĕр тинĕс çилĕ варкăшса кĕрет. Епĕ чăмаданран çурта тĕпĕ кăларса тивертсе йатăм та, йапаласене вырнаçтарма тытăнтăм: хĕçпе пăшала кĕтессе тăратрăм, пистолета сĕтел çине хутăм, кĕрĕк-аçама тенкел çине сарса хутăм, казак тепĕр тенкелĕ çине сарса выртрĕ. Тепĕр вунă минутран вăл харлаттарма та пуçларĕ, анчах епĕ ниепле те çывăрса кайаймастăп, ман умри сĕмлĕхре пĕрмайах шурă куçлă ача йавăнса çÿрет.

Çапла пĕр сехете йахăн иртрĕ. Чÿрече витĕр уйăх çутатса пăхат, унăн пайăркисем пÿртĕн çĕр урайĕ çинче выљанкалаеа тăраççĕ. Сасартăк урай урлă каçакан çап-çутă йĕр çинче ĕмĕлке вĕлтлетсе иртрĕ. Епĕ пĕвĕмпе çĕкленсе чÿрече витĕр пăхрăм: чÿрече умĕнчен такам иккĕмĕш хут чупса иртрĕ те таçта çăва патне

кайса çухалчĕ. Ку чун чăнкă çыран тайлăмĕпе чупса иртсе кайма пултарнине епĕ нийепле те ĕненме пултараймарăм, анчах, апла мар пулсан, унăн урăх ниçтала кайма та май çукçкеха. Епĕ ура çине тăтăм та, çийе аçам уртса йатăм, пилĕк çумне кинжал çакрăм, вара шăппăн-шăппăн пÿртрен тула тухрăм, мана хирĕç суккăр ача утса килет. Епĕ сапур çумне лăпчăнтăм. Ача тÿррĕн, çапах та сыхланарах утса, ман çумранах иртсе кайрĕ. Вăл, хулĕ хушшине темле çыхă хĕстернĕскер, пристăнь йеннеле çаврăнчĕ те, çинçе те чăнкă сукмакпа айалала анма пуçларĕ. «Вăл кунхине чĕлхесĕррисем калаçма пуçлĕç, суккăррисем куçлă пулса тăрĕç», —шухăшласа илтĕм вара епĕ, ăна куçран çухатас мар тесе унăн хыçнереххĕн утса кайса.

Çак вăхăтра уйăха пĕлĕт хуплама пуçларĕ, тинĕс çинчен тĕтре çĕкленчĕ; унăн витĕр çывăхри карап сăмси çинчи хунар çути аран палăрса тăрат. Ак халь ăна шыва путарас пек тинĕс хĕрринче кăпăклă хумсем йавăнса йăлтăртатса тăраççĕ. Епĕ чăнкă çыран тайлăмĕпе аран-аран анкаларăм та, пăхатăп: суккăр ача айала ансан кăшт чарăнса тăчĕ те, сылтăмала пăрăнчĕ, вăл шыв хĕррипе, кĕçех шыва кĕрсе кайас пек утса пырат, ăна хум çавăрса илсе çĕклесе кайассăнах туйăнат; анчах та, лакăмсенчен сыхланса чул çинчен чул çине йепле хăйулăн пусса кайнă тăрăх шутласан, вăл кун пек пĕрре кăна çÿресе курман пулмала! Йулашкинчен вăл, темĕн итленĕ пек пулса, чарăнса тăчĕ, çĕр çине ларчĕ те çыххине хăй

çумне хучĕ. Епĕ мăкăрларах тăракан чул тĕмески хыçне пытанса пăхса тăтăм. Темиçе минут иртсен, тепĕр йенчен шурă ĕмĕлке курăнса кайрĕ, вăл суккăр ача патне пычĕ те, ун çывăхне ларчĕ. Çил вăхăтран-вăхăт вĕсем калаçнă сасса ман пата иле-иле килчĕ.

— Мĕнле-ха, суккăр? — терĕ хĕрарăм сасси, — тăвăл вăйлă; Йанко килеймест пулĕ.

— Йанко тăвăлран хăрамасть, — тавăрчĕ лешĕ.

— Тĕтре çăраланать, — пулчĕ ăна каллех, хуйхăрнине палăртакан хĕрарăм сасси.

— Тĕтре пур чухне хурал тăракан прахутсем хушшипе иртсе кайма çăмăл, — тавăрчĕ ăна лешĕ.

— А вăл шыва путсан?

— Мĕнех вара? Вырсарникун чиркĕве çĕнĕ хăйусăрах кайатăн вара.

Малала калаçма чарăнчĕç; çапах та мана пĕр йапала тĕлĕнтерчĕ: суккăр ача манпа вырăсла лайăх пĕлмен малорос чĕлхипе калаçатчĕ, анчах халь вăл чăн-чăн вырăс чĕлхипе калаçать.

— Куратăн-и, епĕ тĕрĕс калатăп, — терĕ каллех суккăр ача, аллипе сулса илсе, — Йанко тинĕсрен те, çилсенчен те, тăманран та, çыран хĕррисенчи хуралсенчен те хăрамасть. Итле-ха: ку вăл шыв шĕпĕлтетмест, мана улталаймăн — кусем унăн вăрăм кĕсменĕсем.

Хĕрарăм ура çине сиксе тăчĕ те, пăлханнă пек пулса, тинĕс инçетĕ çинеле пăхма пуçларĕ.

— Ухмаха супатăн есĕ, суккăр, — терĕ вăл, — епĕ нимĕн те курмастăп.

Калас пулат, инçетре кимĕ пек йапалана асăрхаса илес тесе епĕ тем чухлĕ тинкерсе пăхрăм пулин те, нимĕн те кураймарăм. Çапла вунă минута йахăн иртрĕ. Кĕçех хумсен сăрчĕсем хушшипе хура пăнчă курăнса кайрĕ: вăл пĕрре пысăкланат, тепре пĕчĕкленет. Хумсен çурăмĕсем çине хуллен пĕрре хăпара-хăпара, тепре ана-ана çыран хĕрринеле кимĕ çывхарса килет. Кимĕпе ишекенĕ, çирĕм çухрăм сарлакăшлĕ тинĕс ури урлă çакăн пек çĕр ишсе каçма хăйнăскер, маттур та харсăр çын пулмала, ку ĕçе тума шухăш тытнăскерĕн сăлтавĕ те пысăк пулнă пулĕ ĕнтĕ! Çакăн пек шухăшпа епĕ ирĕксĕрех хăракаласа мĕскĕн кимĕ çине пăхса тăтăм. Анчах вăл, кăвакал пек, чăмса илет те, унтан каллех, çунатсемпе хăлаçланнă пек, кĕсменĕсемпе хăлаçланса кăпăк сирпĕнчĕкĕ хушшипе çăткăнлă авăрсенчен сике-сике тухат. Акă вăл çыран хĕррине сулăмлăн пырса çапăнĕ те, чĕрпĕкĕн-чĕрпĕкĕн саланса кайĕ, тесе шухăшласа тăраттăм епĕ, анчах вăл çăмăллăн хăйаккăн пăрăнчĕ те пĕр пĕчĕк кукăр сăмсахне ним инкек-синкексĕрех пырса ларчĕ. Кимĕ çинчен вăтам пÿлĕ çын, така тирĕнчен çĕлетнĕ тутар çĕлĕкне тăхăннăскер, сиксе тухрĕ. Вăл аллипе сулчĕ те, виççĕшĕ те кимĕ çинчен темĕн кăларма тытăнчĕç. Питех те нумай йапала кăларчĕç, çавăн пек йăвăр тийенĕ кимĕ йепле майпа шыва путманнине епĕ ку таринччен те ăнланса илме пултараймастăп. Хулпуççийĕсем çине кашнийех пĕрер çыхă хурса вĕсем çыран хĕрринеле утса кайрĕç, кĕçех епĕ

вĕсене куçран çухатрăм. Манăн киле таврăнмала пулчĕ. Анчах та, калас пулат, ку тĕлĕнмеле ĕç мана пăлхантарчĕ, епĕ аран-аран, тенĕ пек, ире кĕтсе илтĕм.

Казак ыйхинчен вăранса епĕ тумтирпе иккенне асăрхасан питех те тĕлĕнчĕ, анчах епĕ ăна сăлтавне каласа памарăм. Шупка-кĕрен тĕслĕ çуркаланнă пĕлĕт татăкĕсемпе сапăнса тулнă кăвак тӳпе çине тата симĕс-кăвак йĕрпе тăсăлса выртса шуррăн курăнакан майак башнилĕ сăртлă çыранпа пĕтекен инçетри Крым çыранĕ çине самай вăхăт хушши пăхса киллен-сен, епĕ, комендантран Геленджике миçе сехетре тухса кайма пултарни çинчен ыйтса пĕлес тесе, Фанагори крепăçне тухса утрăм.

Анчах, çĕр çăттăрах! Комендант мана татăклăн нимех те каласа пама пултараймарĕ. Пристăнь çинчи прахутсем пурте йе хуралăн, йе купцасен пулнă мĕн. Вĕсем тухса кайма та хатĕрленмен-ха.

— Тен, тата виç-тăвата кунтан пуштă пăрахучĕ килĕ,—терĕ мана комендант,—ун чухне курăпăр вара.

Епĕ салхулăн та çиллĕн киле таврăнтăм. Манăн казак мана алăк умĕнче хăй шикленнине палăртакан сăн-питпе кĕтсе илчĕ.

— Начар, ваше благороди!—терĕ вăл мана.

— Çапла çав, шуйттан пĕлет, тахçан тухса кайăпăр епĕр кунтан!

Кун хыççăн вăл пушшех пăлханса ӳкрĕ, ман çумма пĕшкĕнсе шăппăн çапла каларĕ:

— Кунта таса мар! Епĕ пайан хам палла-

жан Хура тинĕс ҫинчи уретнике тĕл пултăм, вăл пĕлтĕр пирĕн отрйадра тăратчĕ, епĕ ăҫта чарăнса тăнине каласа парсанах, вăл мана: «кунта,—терĕ,—усал ҫынсем пурăнаҫҫĕ!» Чăнах та, мĕнле суккăр-ха вăл? Таҫта та пĕччене ҫӳрет—пасара та, ҫăкăр илме те, шыв ăсма та... кунта вăл апла-капла ҫӳренине асăрхамаҫҫĕ пулђ ҫав, хăнăхса ҫитнĕ пулмала.

Мĕнле-ха вара? Хуҫа майри тухкаласа ҫӳрерĕ-и хăт?

— Пайан есĕ ҫук чух карчăкпа хĕрĕ килчĕҫ.

— Мĕнле хĕрĕ? Унăн хĕрĕ ҫук вĕт.

— Кам мурĕ пĕлет ăна, хĕрĕ пулмасан кам пултăр-ха: авă, карчăкки халђ хăйĕн пӳртĕнче ларат-ха.

Епĕ лаҫҫа кĕтĕм. Кăмакана питех те вăйлă хутса йанă, унта апат вĕресе ларат. Апачĕ ĕнтĕ, чухăнсемшĕн пулсан, ытлашшипех лайăх темеле. Карчăк ман ыйтусем ҫине—епĕ хăлхасăр, илтместĕп, тесе тавăра-тавăра хурат. Мĕн тăвăн-ха унпа. Епĕ кăмака умĕнче ҫунакан вут ҫине ҫатракасем пăрахса ларакан суккăр ачапа калаҫу пуҫласа йатăм.

— Нуккă, суккăр шуйтан ҫури,—терĕм епĕ ăна хăлхинчен йарса илсе,—кала: есĕ ҫĕрле ҫыхă ҫĕклесе ăҫта сулланса ҫӳрерĕн, е?

Сасартăк ман суккăр йĕрсе йачĕ, кăшкăрма, ахлатма пуҫларĕ.

— Ăҫта кайрăм епĕ? Ниҫта та кайман... ҫыхăпа? Мĕнле ҫыхăпа?

Карчăк халђ каланине илтрĕ, мăкăртатма пуҫларĕ:

— Шухăшласа кăлараççĕ çав, çитменне мĕскĕн çын çинчен. Мĕншĕн тапăнатăр есĕр ăна? Мĕн турĕ вăл сире?

Мана ку йапала йăлăхтарса çитерчĕ. Епĕ, ку тĕлĕнмеле ĕçĕн уççине шыраса тупма тăрăшатăпах тесе, тулала тухрăм.

Епĕ кĕрĕк-аçампа чĕркентĕм те, сапур çумĕнчи чул çине пырса ларса, таврари инçете пăхма пуçларăм. Ман умра çĕрлехи тăвăлпа хускалнă тинĕс сарăлса выртат. Унăн тĕлĕрме пуçланă хула сĕрлевĕ йевĕр шавĕ мана иртнĕ çулсене аса илтерчĕ, манăн шухăшсене çурçĕреле, хамăрăн сивĕ столицăна куçарчĕ. Асаилÿсемпе пăлханнăскер, епĕ манăçа тухрăм... Çапла пĕр сехете йахăн йе ытларах та иртрĕ пулĕ. Сасартăк ман хăлхана темскерле йурă майлăрах сасă пырса кĕчĕ, епĕ тĕлĕнмелипех тĕлĕнтĕм. Ку чăнахах та йурă пулчĕ иккен, хĕрарăм сасси, чечен сасă,—анчах ăçтан-ха вăл?.. Итлетĕп: кĕвви кĕрнеклĕ, вăл пĕрре вăрăмăн та хурлăхлăн, тепре васкавлăн та уçăмлăн йанăраса кайат. Çаврăнса пăхатăп—таврара никам та çук. Татах итлетĕп—сасăсем пĕлĕт çинчен ÿкеççĕ пек. Пуçа çĕклесе пăхатăп: епĕ пурăнакан пÿрт тăрринче йарăм-йарăм тăрăх кĕпелĕ, çивĕтне сапаласа йанă хĕр тăрат, шыври пекех ĕнтĕ! Вăл, хĕвел пайăркисем чăрмантарасран куçне аллаппийĕпе хÿтĕлесе, тинкерсех инçетеле пăхса тăрат, кĕçех кулса илет те, хăйпе-хăй калаçа пуçлат, кĕç каллех йурласа йарат.

Епĕ ку йурра сăмахран сăмах аса илсе йултăм:

„Вĕçсĕр-хĕрсĕр ирĕкре—
Симĕс тинĕс тăрăх,
Карапсем çўреççĕçке—
Шурă парăслăскерсем.
Çав карапсем хушшипе
Пĕчĕк кимĕм манăн,
Парăссемсĕрех ишет—
Мăшăр кĕсменпе.
Ахăрат-и тăвăлĕ,—
Кивĕ карапсем
Çунатсене çĕклесе
Ыткăнаççĕ тинĕспе.
Пуç тайма пуçлатăп еп
Вара тинĕсе:
„Хайар тинĕс, ан тивсемччĕ
Манăн кимĕме.
Манăн кимĕ турттарат
Хаклă йышши йапала.
Тĕттĕм çĕр унпа ишет
Харсăр пуçлă йаш-хусах".

Ирĕксĕрех ман пуçа, епĕ иртнĕ çĕр те çак сассах итлерĕм вĕт-ха, тейекен шухăш пырса кĕчĕ. Епĕ минутлăха шухăша кайрăм. Тата тепĕр хут пўрт тăрринеле пăхса илтĕм, анчах хĕр курăнмарĕ. Кĕçех вăл урăх йурра йурлакаласа, ман çумранах чупса иртрĕ, пуç пўрнипе вăта пўрнине шачлаттаркаласа илчĕ те, карчăк патне чупса кĕрсе кайрĕ, унта вара вĕсен тавлашу пуçланчĕ. Карчăк çилленсе кай-

рĕ, вăл хыттăн ахăлтатса кулма пуçларĕ. Акă, куратăп, манăн тинĕс хумĕсен хĕрĕ каллех сиккелесе чупса килет. Манпа танлашсан вăл чарăнса тăчĕ те, епĕ пуррине кура тĕлĕннĕ пек пулса, мана куçран тинкерсе пăхрĕ, унтан типтерсĕррĕн çаврăнчĕ те, хуллен пристăнь йеннеле утса кайрĕ. Кунпах ĕç пĕтмерĕ-ха: йаракунах вăл ман хваттер умĕнче çаврăнкаласа çӳрерĕ, йурă йурланипе сиккелесе илнисем пĕр минутлăха та чарăнмарĕç. Тĕлĕнмеле чĕрчун! Унăн сăн-питĕнче вăл ăсран кайнă иккенне палăртакан паллă таврашĕ çук; апла мар-ха, ăсран кайма мар, унăн чĕрĕ те вичкĕн куçĕсем ман çинче чарăнса тăрса шăтарасла пăхаççĕ, вăл куçсенче темле магнитла туртăм вăйĕ пур пек туйăнчĕ мана, кашни пăхмассеренех вĕсем ыйту кĕтсе тăраççĕ пек. Анчах та вăл, епĕ калаçма пуçласанах, йĕкĕлтенĕ пек кулса илет те, ман умран тара парать.

Тĕрĕссипе каласан, епĕ нихăçан та ун йеверлĕ хĕрарăма курманччĕ. Çу-ук, ăна илемлĕ теме çук, анчах манăн илемлĕх тĕлĕшпе те малтанах пĕлсе тăрса, хама-хам ĕнентересси пур. Вăл хĕрте ăратлăх нумай... Хĕрарăмсен ăратлăхĕ, лашасенни пекех, пысăк йапала, çакна шыраса тупнă ĕç çамрăк Францийе тивĕçлĕ. Вăл, çамрăк Франци мар-ха, халь хи ăратлăх тени, пуринчен ытла çын уттинче тата аллисемпе урисенче палăрать. Раççейре тӳрĕ сăмсасем пĕчĕкçеç урасенчен сахалтарах тĕл пулаççĕ. Манăн йурă ăстаçи вунсакăр çултан иртмен пулмала. Унăн çав тери çаврăнăçулă та

типтерлĕ пĕвĕ, уйрăмăнах, пĕр хăйшĕн çеç килĕшмеле, хăйне май пуçне тайни, вăрăм та çырă çӳçĕсем, кăшт çеç хĕвелпе пиçнĕ ĕнсипе хулпуççийĕсем темле ылттăн тĕсленсе тăни, уйрăмăнах тӳрĕ сăмси—çаксем пурте маншăн çав тери илемлĕн, илĕртсе тăнăн туйăнчĕç. Епĕ унăн ытахальтен çеç пăхса илекен куçĕсенче темскерле тискерлĕхе, вăл хăй ăшĕнче темскер пытарнине асăрхарăм пулин те, унăн куллинче темскер, уççăнах уйăрса илме çукскер пур пулсан та, çапла ĕнтĕ вăл çынна малтанах чухласа илтерекен вăй: унăн тӳрĕ сăмси мана ăнран йачĕ. Мана Гетен[1] Миньйонне, вăл хăйĕн нимĕçле сисĕм-асăмĕпе шухăшласа тунă тĕлĕнмеле хĕрĕн образне курнăнах туйăнчĕ. Чăнахах та, вĕсен хушшинче пĕрпеклĕх питех те нумай: çав тери канăçсăрланса ларма-тăма пĕлмесĕр çӳренĕ хушăрах, сасартăк шăпланса ларса, пĕр хускалми пулса кайни, шухăшлаттаракан йуптарулă калаçусем, сиккелесе илнисем, хăйне майлă йурăсем—пурте çав-çавах.

Каç-пулттипе епĕ ăна алăк умĕнче чарса тăратрăм та, çакăн пек калаçу пуçласа йатăм:

— Чипер пике, кала-ха мана,—ыйтрăм епĕ,—мĕскер турăн есĕ пайан пӳрт тăрринче?

— Çил ăçтан вĕрнине пăхрăм.

— Мĕн тума кирлĕ пулчĕ вăл сана?

— Ăçтан çил вĕрет, çавăнтан телей килет.

— Мĕнле апла? Йурăпа телейе йыхăртăнăм вара есĕ?

[1]) Гете (1749—1832)—нимĕçсен чаплă поечĕ. Миньйонă—Гете çырнă произведенири героиньă.

— Ăçта йурă йурланаť, унта телей пулаť.

— Йуррупа телейне мар, хуйхуна чĕнсе илсен мĕн тăвăн-ха вара?

— Мĕнех вара? Ăçта лайăххи пулмасť, унта усалли пулаť, усалпа ырлăх хушши инçех мар...

— Кам йурлама вĕрентрĕ-ха сана ку йурра?

— Никам та вĕрентмен, асăма килет-тĕк йурлатăп. Камăн итлемеле, çав итлет; камăн итлемеле мар, вăл ăнланмасť.

— Мĕн йатлă-ха есĕ, манăн йурă ăстиçĕм?

— Кам шыва кĕртнĕ çав пĕлет.

— А кам шыва кĕртнĕ?

— Ăçтан пĕлес ман ăна.

— Еккей, пытарăнчăк шухăшлăскер! А епĕ вĕт сан çинчен пĕр йапала пĕлетĕп (вăл сăнĕпе пачах улшăнмарĕ, тутине те хускатмарĕ, ĕç пачах та ун çинчен пымасť пек). Епĕ есĕ ĕнер çĕрле çыран хĕррине кайса килнине пĕлетĕп. Кунта вара епĕ ăна, пăлхатас тесе, хам мĕн курни çинчен мăнаçлăн тĕпĕ-йĕрĕпе каласа патăм, вăл пачах та пăлханмарĕ, çăвар туллин ахăлтатса кулса йачĕ:

— Нумай курнă та, сахал пĕлетĕр. Анчах пĕлнине çăрапа питĕрсе усрăр.

— А епĕ, калăпăр, кун çинчен коменданта пĕлтерме шухăш тытатăп пулсан?

Ку тĕлте вара епĕ йурийех сăна мăнаçлантарса ун çине хайаррăн пăхрăм. Сасартăк вăл сиксе илсе йурласа йачĕ те, йăвăç тĕми хушшинчен хăратса тăратнă кайăк пек, таçта кайса куçран çухалчĕ. Йулашки сăмахсем ма-

нӑн пачах та вырнаҫулӑ пулмарӗҫ; вӗсем сивӗ сӑмахсем пулса тухнине епӗ малтанах асра та тытмарӑм, анчах кайарахран вара манӑн вӗсем пирки пӑшӑрханма та тӗл килчӗ.

Тӗттӗм пула пуҫласанах епӗ казака ҫул ҫинче чухнехи пек чейник вӗретме хушрӑм, ҫурта ҫутса йатӑм, ҫул ҫинче туртмали чӗлӗме тивертсе йарса сӗтел умне пырса лартӑм. Иккӗмӗш стакан чейе хаљ ҫеҫ ӗҫсе пӗтерме тӑнӑччӗ, сасартӑк алӑк чӗриклетрӗ, ман хыҫра ҫӳхе кӗпе чӑштӑртатнипе ура сассисем илтӗнсе кайрӗҫ. Епӗ шартах сиксе илтӗм те, ҫаврӑнса пӑхрӑм—хыҫра хайхи хӗр, манӑн тинӗс хумӗсен хӗрӗ тӑра парат. Шӑппӑн, сӑмах чӗнмесӗр, пырса ларчӗ вӑл ман умма, куҫӗсемпе ман ҫине тинкерчӗ. Хам та пӗлместӗп, темшӗн, вӑл ман ҫине тӗлӗнмеле ачашшӑн пӑхнӑ пек туйӑнчӗ. Епӗ вара ӗлӗкхине, хам ҫине ҫавӑн пекех ачашшӑн пӑхнӑ куҫсенчен пӗрне аса илтӗм,—ун пек пӑхакан куҫсем ман пурнӑҫпа ирӗккӗнех выљатчӗҫ. Вӑл епӗ мӗн те пулин ыйтасса кӗтсе тӑрат пек; анчах епӗ, пӑлханса ӳкнине пула, сӑмах та чӗнейместӗп. Унӑн пичӗ хӑй чунӗ пӑлханнине палӑртакан тӗксӗмрех шуранка тӗспе витӗннӗ; унӑн алли сӗтел ҫийӗпе ним тӗлсӗр шукаласа ҫӳрет; епӗ вӑл кӑшт ҫеҫ палӑрмала чӗтренине асӑрхарӑм; кӑкӑрӗ унӑн пӗре ҫӳле хӑпарса анат, тепре вӑл ӑна сывлама чарнӑн туйӑнат. Ку мыскара мана йӑлӑхтарса ҫитере пуҫларӗ, епӗ ку шӑплӑха ҫӑмӑл майпах, ӑна пӗр стакан чей сӗнсе пӗтерес тесе шухӑшласа тӑраттӑм, сасартӑк вӑл

сиксе тăчĕ те, аллисемпе ман мăйран ыталаса тытрĕ; манăн тута çумне унăн нӳрĕ те кăвар пек вĕри тути пырса чăплатрĕ. Манăн куç хуралса килчĕ, пуç çавăрнса кайрĕ; епĕ ăна мĕн пур çамрăк хĕрӳлĕхпе ытакласа илсе хам çумма мĕн пур вăйран чăмăртарăм, анчах вăл ман алăсем хушшинчен çĕлен пек шăвăнса тухрĕ, хăлхаран: «кĕçĕр çĕрле, пурте çывăрса кайсан, çыран хĕррине тух», тесе пăшăлтатрĕ те, пӳлĕмрен ухă пек тулала ыткăнса тухрĕ. Çенĕхре вăл чейнике тата урай варринче çунса ларакан çуртана тӳнтерсе хăварчĕ. «Еккей, арçури-хĕр!» кăшкăрчĕ казак, улăм çине майлашса выртса манран йулнă чейпе ăшăнма ĕмĕтленнĕскер. Кун хыççăн тин вара епĕ хам ăçтине туйса илтĕм.

Тепĕр икĕ сехетрен, пристăнь çинче çынсем шавлама чарăнсан, епĕ хамăн казака ыйăхран вăратрăм: «Епĕ пистолетран персе йарсан,— терĕм епĕ ăна,—есĕ çыран хĕррине . чупса тух». Вăл куçне чарса пăхрĕ, пĕр шухăшласа тăмасăрах: «Итлетĕп ваше благороди!» терĕ. Епĕ пистолета пиçиххи çумне хĕстертĕм те тула тухрăм. Вăл мана çыран хĕрринче, айалала анмали вырăнта кĕтсе тăрат. Хăй питех те çăмăл тумланнă, сапăр та пиçĕ пӳне пысăках мар тутăрпа çавăрса çыхнă.

— Утăр ман хыçран!—терĕ вăл мана, алран тытса. Епĕр айалала анма пуçларăмăр. Анланмастăп, йепле майпа епĕ ĕнсене хуçмарăм-ха. Айалта епĕр сылтăмала пăрăнтăмăр, иртнĕ каç суккăр ача хыççăн кайнă çулпалах

утса кайрăмăр. Уйăх тухман-ха, икĕ çăлтăр кăна, тинĕс çинчи икĕ тинĕс майакĕ пек, тĕксĕм-кăвак тÿпере йăлтăртатса тăраççĕ. Йăвăр хумсем çав тери сăпайлăн йаранса, пĕрин хыççăн тепри йăванса килеççĕ те, çыран хĕррине тăратса хăварнă тăлăх кимме аран-аран çĕклесе чÿхентереççĕ.

— Кĕрĕр кимĕ çине,—терĕ манăн çулçÿревçĕ. Епĕ турткалашса тăтăм—тинĕс тăрăх сисĕм-туйăма çĕклентерсе çÿреме йуратсах каймастăп епĕ,—анчах кайала чакма вăхăт мар. Вăл кимĕ çине сиксе кĕчĕ, ун хыççăн епĕ те. Шухăша та çавăрса илеймерĕм, епĕр ишме пуçланă та иккен.

— Мĕне пĕлтерет ку?—терĕм епĕ çиллĕн.

— Ку,—тавăрса сăмах хушрĕ вăл, мана тенкел çине лартнă май пĕвĕме аллисемпе йавалаcа тытса,—ку епĕ сана йуратнине пĕлтерет...

Унăн питçăмартийĕ ман питçăмарти çумне çыпçăнчĕ, епĕ хам питĕм çинче унăн çулăм пек вĕри сывлăшне туйса илтĕм. Сасартăк шыва темĕн шампăртатса ÿкрĕ: епĕ пиçиххийе тытса пăхрăм—çумра манăн пистолет çук. О, кунта вара манăн чĕрене темрен асăрханма кирлĕ хăрушă шухăш çурса кайрĕ; пуçа йун тапса тулчĕ. Хыçа çаврăнса пăхатăп: епĕр çыранран алă чалăш пек шалала ишсе кайнă. Ишме пĕлместĕп-çке епĕ! Хĕре хам çумран тĕксе уйăрма тăрăшатăп. Вăл ман тумтиртен кушак пек çатăрласа тытнă, сасартăк пĕрре вăйлăн тĕкни мана кăштах тинĕсе кăларса пă-

рахмарĕ. Кимĕ сулланса кайрĕ, епĕ çапах тытăнса тăтăм; пирĕн хушăра хĕрӳ кĕрешӳ пуçланса кайрĕ. Хам урса кайни ман вăйа хушăнтарчĕ, анчах епĕ тăшман манран йăррине, ку тĕлĕшпе епĕ ăна парăннине часах туйса илтĕм.

— Мĕн кирлĕ сана?—кăшкăрса йатăм епĕ, унăн пĕчĕк аллисене хыттăн чăмăртаса; пӳрнисем шатăртатрĕç, анчах вăл кăшкăрса йамарĕ. Ку асаплăха вăл хăйĕн çĕленле манерĕпе чăтса иртерчĕ.

— Есĕ куртăм тетĕн,—терĕ вăл,—есĕ кайса калатăн!—Унтан пĕтĕм вăйран тĕртсе мана кимĕ çинчен шывала усăнтарса йачĕ; епĕр иксĕмĕр те пилĕк таран кимĕ çинчен шывала усăнса тăтăмăр, унăн çӳçĕ шывах перĕнсе тăрат, ку минут татăклă минут пулчĕ. Епĕ чĕркуççипе кимĕ тĕпне хирĕнтĕм, хăрах алăпа унăн çивĕтне, тепĕр алăпа мăйĕнчен йарса тытрăм та, вăл ман тумтиртен аллисене вĕçертсе йачĕ, вара самант епĕ ăна хумсем çине тĕртсе пăрахрăм.

Самай тĕттĕм пулса килчĕ, тинĕс кăпăкĕсем хушшинче унăн пуçĕ ик-виçĕ хут курăнса илчĕ те, вара епĕ ăна урăх курмарăм. Кимĕ тĕпĕнче епĕ çурмаран хуçăлнă кивĕ кĕсмен хуçăкне тупрăм, вара аран-аран, чылай нушаланнă хыççăн, пристăне çитсе чарăнтăм. Çыран хĕррипе хамăн пӳртĕм патне утса кайнă май, епĕ ирĕксĕрех иртнĕ каç суккăр ача тинĕс урлă ишсе килнĕ çынна кĕтсе тăнă вырăн йеннеле пăхса пытăм. Уйăх тӳпене тухма ĕлкĕрнĕ, мана çыран хĕрринче темле шурă

тумтирлĕ çын ларнă пек туйăнчĕ. Епĕ, ку мĕн иккенне пĕлес тесе, ун патне йăпшăнса пырса, чăнкăланса анакан çыран хĕрринчи курăк çине тăсăлса выртрăм. Пуçа кăшт çĕклесе пăхсан, епĕ, сăрт тĕми çинче выртаканскер, айалта мĕн тунине аванах курма пултартăм. Хамăн шыври хĕре палласа илсен, хытах та тĕлĕнмерĕм, хĕпĕртенĕ пек пултăм кăна. Вăл хăйĕн вăрăм çӳçĕсенчен тинĕс кăпăкне пăчăртаса кăларать; исленнĕ кĕпи унăн сапăр та пиçĕ пĕвне, çӳлĕ кăкăрĕсене аванах палăртса тăрать. Кĕçех инçетре кимĕ курăнса кайрĕ; вăл çыран хĕррине хăвăрттăн çывхарса пычĕ, ун çинчен иртнĕ каçхи пекех тутар çĕлĕкне тăхăннă çын тухрĕ, анчах вăл çӳçне казаксем пек кастарнă, чĕнпиçиххи çумĕнче унăн вăрăм çĕçĕ кăмсарăнса тăрать.

— Йанко,—терĕ хĕр,—пĕтрĕмĕр!

Малала питех те хуллен калаçма пуçларĕç, епĕ нимĕн те илтсе йулаймарăм.

— А ăçта-ха пирĕн суккăр?—терĕ йулашкинчен Йанко, сассине хăпартса.

— Епĕ ăна илсе килме йатăм,—илтĕнчĕ ответ.

Тепĕр темиçе минутран çурăмĕ çине михĕ хунă суккăр ача килсе çитрĕ. Унăн миххине кимĕ çине хучĕç.

— Итле-ха суккăр!—терĕ Йанко,—есĕ леш вырăна сыхласа усра-ха... Пĕлетĕн-и?—унта хаклă таварсем... кала (епĕ йатне илтсе йулаймарăм), епĕ текех унăн тарçи мар ĕнтĕ; ĕçсем начарланса пыраççĕ; вăл мана текех кураймĕ;

халђ хăрамала; урăх çĕре ĕç шырама кайатăп, ман пек пултаракан çынна тупаймасť ĕнтĕ вăл. Тата çакна кала, ĕçсемшĕн лайăх тўлесе пынă пулсан, Йанко ăна пăрахман пулĕччĕ: ăçта çил вĕрет-те тинĕс шавлаť—маншăн таçта та çул пур.

Кăшт чарăнса тăнă хыççăн Йанко каллех малала калаçма пуçларĕ.

— Вăл манпа пĕрле пыраť,—терĕ вăл, хĕр йеннеле пуçне тайса,—ăна кунта йулма йурамасť. Карчăка кала—вилме вăхăт çитнĕ, те; ытлашши пурăнаť, намăса та пĕлес пулаť, те. Вăл пире текех кураймасť ĕнтĕ.

— А епĕ?—терĕ суккăр салхулă сасăпа.

— Мĕн тума кирлĕ есĕ мана?—илтĕнчĕ ответ.

Çак вăхăтрах манăн тинĕс хумĕсен хĕрĕ кимĕ çине сиксе кĕчĕ те, йулташне аллипе сулчĕ; лешĕ суккăр ача алли çине темĕн хучĕ те:

— Ме, хăвна валђлђи премĕк ил,—терĕ.

— Çак анчах-и?—терĕ суккăр.

— Ак, ме сана тата,—терĕ лешĕ. Çĕре ўкнĕ укçа чул çумне перĕнсе шанкăртатса илчĕ. Суккăр ача ăна илмерĕ. Йанко кимĕ çине ларчĕ; çил çыран йенчен вĕрет: вĕсем пĕчĕк парăса çĕклерĕç те, хăвăртах тинĕселе ишсе кĕрсе кайрĕç. Тĕксĕм хумсем хушшипе уйăх çути айĕн шурă парăс нумайччен вĕлтлетсе курăнчĕ. Суккăр ача çаплах çыран хĕрринче лараť-ха. Акă, ман хăлхана ĕсĕкленĕ йевĕрлĕ сасă илтĕнсе кайрĕ. Кăна чăнах та суккăр ача йĕрет; вăл нумайччен-нумайччен

йёрсе ларчĕ... Мана салхулăх пусса илчĕ. Тӳрĕ кăмăллă контрабандиссен лăпкă ушкăнне мана хамăн тура-пӳрниййĕн мĕн тума хутшăнтарса йамала пулнă-ха? Тăп тăракан çăлкуçĕ çине пăрахнă чул пек, епĕ вĕсен лăпкăлăхне пăлхатрăм, хам та чул пекех кĕç-вĕç шыва анса каймарăм!

Епĕ киле таврăнтăм. Çенĕхре йăвăç чашăк çинче çунса пĕте пуçланă çурта шатăртатса тăрат. Манăн казак, епĕ ăна çывăрма хушман пулин те, пăшала икĕ аллипе тытнипех вăйлăн çывăрса кайнă. Епĕ ăна чăрмантарас темерĕм, çуртана илтĕм те пӳрте кĕтĕм. Çĕр çăттăрах! манăн шкатулкă, кĕмĕл йĕнлĕ хĕç, дагестан кинжалĕ, тусăм панăскер,—пĕри те çук. Кунта тин вара епĕ ылханлă суккăр мĕнле йапаласем йатса пынине туйса илтĕм. Казака самай сиввĕн тĕрткелесе вăратрăм та, йатлаçса тăкрăм, çилленсе илтĕм, анчах ним тума та çук! Суккăр ача мана çаратни çинчен, вунсакăр çулхи хĕр кĕç-вĕç шыва путарма тăни çинчен пуçлăхсене елеклесе панă пулсан, кулă пулман пулĕччĕ-ши вара? Мухтав турра, ирхине мана Тамаҥрен тухса каймa май килчĕ. Карчăкпа тата суккăр ачапа мĕн пулни çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Мĕн ĕç-ха мана, çула тухнă офицере, çитменнине пушă лашисене илме тивĕç хутпа хысна ĕçĕшĕн çӳрекен офицере, мĕн ĕç-ха мана çынсен хуйхисемпе савăнăçне йĕрлесе çӳреме!